Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

25 (7450) № ✻ Юн кун, 2007 çулхи мартăн (пуш) 28-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

### Республика шайĕнчи семинар-канашлу

## Пурнăç çĕнĕлĕх çине куçма хистет



**Мартăн 23-мĕшĕнче Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхра республикăри семинар-канашлу пулса иртрĕ. Çĕнĕ йышши техникăпа тулнă трактор паркĕ 150 ытла çынна йыхравларĕ (тĕплĕнрех хаçатăн çитес номерĕнче паллаштарăпăр).**

**Сăн ӳкерчĕкре: семинар-канашлăва хутшăнакансем.**

### Райадминистрацире

## Тава тивĕçлĕ ĕçшĕн

Район администрацийĕн пуçлăхĕн 2007 çулхи мартăн 14-мĕшĕнчи 99 номерлĕ йышăнăвĕпе район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

Çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхра нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн "Моргаушское" çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх МУП бухгалтерне **Алиса Алексеевна МАГАЕВАНА**.

Ĕçри çитĕнӳсемшĕн:

"Моргаушское" çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх МУП участок мастерне **Владимир Николаевич ПАВЛОВА**;

Мăн Сĕнтĕрти çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх МУП котельнăй операторне **Альберт Николаевич СИМАКОВА**.

### Радиохыпарлав пирки

## Ял çыннишĕн вырăнти хыпарсем пĕлтерĕшлĕрех

Чăваш Ен Правительствин председателĕ Сергей Гапликов Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе ирттерекен йăлана кĕнĕ планеркăри вырăнти радиохыпарлав тĕлĕшпе тухса тăнă лару-тăрупа кăмăлсăр пулнине палăртнă. Паянхи кун районсенче пралуклă радиохыпарлав ĕçлеменнипе пĕрех, эфирлине туса хатĕрлемен. Правительство пуçлăхĕ палăртнă тăрăх, ял çыннишĕн вырăнти хыпарсем пĕлтерĕшлĕрех тата интереслĕрех. Вăл патшалăхăн Çыхăну тата информатизаци енĕпе ĕçлекен комитечĕн председательне Сергей Захарова Культура министерствипе пĕрле çак ыйтăва Республика кунĕ тĕлне татса пама хушнă.

**(Малаллине 2-мĕш стр. вулăр).**

### Раççейре

## Апрельтен пенси ӳсет

Кăçал пенси укçи пĕрремĕш хут апрелĕн 1-мĕшĕнчен ӳсет. Пенсин тĕп пайне 7,5 процент чухлĕ пысăклатаççĕ. Иккĕмĕш хут пенси октябрь уйăхĕнче хăпармалла. Çĕршывĕпе вăл çулталăк вĕçне вăтамран 3100 тенкĕпе танлашмалла.

2010 çул тĕлне пенси 5000 тенкĕне çити ӳсмелле. Ку виçе 2007 çул вĕçĕнчинчен 1,7 хут пысăкрах. Çакăн пирки вырсарни кун правительствăн вице-премьерĕ Александр Жуков пĕлтернĕ.

### Республикăра

## Библиотекăсене – Чăваш энциклопедийĕ



Хăй вăхăтĕнче самаях пысăк тиражпа кун çути курнă "Чăвашсен кĕске энциклопедийĕ" вулакансен хушшинче питĕ хăвăрт саланчĕ. "Ăс-хакăл çӳпçи" тесе хакларĕç ăна ун чухне. Халĕ, акă, нумай томпа кăларма палăртнă Чăваш энциклопедийĕн пĕрремĕш томĕ вулакан патне çитрĕ. Тĕплĕ хатĕрленĕ сумлă кĕнекене, ăна "пĕлӳ мулĕ" тейĕттĕм, хула-районсен тата муниципалитет библиотекисене чи малтан тивĕçтереççĕ. Культура министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх, асăннă энциклопеди республикăри кашни библиотекăрах пулĕ. Вĕсене валли 800 экземпляр уйăрнă та ĕнтĕ. Тепĕр 650 экземплярне шкулсенчи библиотекăсем илĕç. Библиотекăсене энциклопедие республика бюджетĕнчен уйăрнă укçа-тенкĕ шучĕпе çитереççĕ.

Кăларăмăн пĕтĕмĕшле тиражĕ – 5 пин экземпляр. Вăл ирĕклĕ сутлăха тухнă. Чăваш кĕнеке издательствипе Чăваш бибколлекторĕн лавккисенче туянма пулать. Хакĕ – 590 тенкĕ. Иккĕмĕш томĕ çулталăк вĕçĕнче хатĕр пулмалла.

### Ыр кăмăллăх марафонне пĕтĕмлетсе

# ЫРĂ ЧУНЛĂ ПУЛМА АН ИМЕНĔР

### *"Тавах ыр кăмăллă пиччесемпе аппасене"*

Ачалăхран, йăлтах ачалăхран пуçланать пурнăçра. Çаруран чупнă самантсене, эсĕ, вулаканăм, астăватăн вĕт, манман. Ун чухнехи телейлĕ кунсем, килекенсем те йышлăн пулчĕç. Вĕсем хăйсен çĕнĕ хуçисене тупĕç-ха. Уявра вара çӳлерех асăннă сумма татах та ӳсрĕ, мĕншĕн тесен залра ларакан ачасемпе ашшĕ-амăшĕсемсĕр пуçне районти предприятисемпе организацисен ертӳçисем те чылай пулчĕç.



**«Муркаш райповĕпе Мăн Сĕнтĕрти çăкăр заводĕнче ай-яй тутлă çимĕçсем хатĕрлеççĕ иккен».**

пурнăça кĕнĕ малтанхи ĕмĕтсем паян та пирĕн кунçула çутатсах тăраççĕ, асран тухмаççĕ. Иртнĕ эрне кун районти Культура çуртне пуçтарăннă сахал тупăшлă, нумай ачаллă çемьесенчи 60 яхăн ачашăн та асран тухми телейлĕ кунсенчен пĕри пулса юлчĕ пулĕ. Çак кун кунта «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партийĕн регионти уйрăмĕ пуçарнипе ирттернĕ "Ачалăх ячĕпе, йăлтах ачалăхшăн" ыр кăмăллăх марафонне пĕтĕмлетрĕç. Муркаш райповĕ тата "Сундырь-Хлеб" чикĕллĕ яваплăхлă общество тăрăшнипе ачасем хăйсем чăн-чăн уява лекнине алăкран кĕрсенех туйса илчĕç. Фойере вырнаçтарнă сĕтелсем çинче вĕсем юратнă пылак çимĕç, лимонад. Çумра вара – хăйсене юратакан ашшĕ-амăшĕ. Юнашар тата ыр кăмăллă çынсем пулсан, кунтан ытла мĕн кирлĕ вĕсене хальлĕхе.

Ыр кăмăллăх тенĕрен, сахал тупăшлă, нумай ачаллă, ăнăçсăр çемьесенчи ачасене пулăшас тĕллевпе çулсерен ирттерекен ыр кăмăллăх марафонĕ шăпах тĕнчене ыр кăмăллă çынсем нумайрах иккенне кăтартса парать. Кăçалхи марафонта та ятарласа уçнă счет çине иртнĕ эрне кун тĕлне 76335 тенкĕ укçа пуçтарăнчĕ. Ача тумтирне, ытти япаласем илсе

Акă, сцена çине Муркашри искусство шкулĕн ачисем тухрĕç. Илемлĕ ташă çаврăмĕ чуна татах та çĕклерĕ. Уяв пуçланчĕ.

Чи малтанах пуçтарăннисене район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – культура тата архив ĕçĕсен пайĕн ертӳçи А. Е. Андреева саламларĕ. Хăйĕн сăмахĕнче вăл марафона хутшăннă çынсен пулăшăвĕ районти нумай-нумай çемьешĕн вăхăтлă тата çав тери кирлине палăртрĕ.

– Ырă ĕçĕрпе эсир ырă ят илетĕр. Ырă ята илме ырă ĕç тумалла, ырă ĕç тума ырă ăс кирлĕ, ырă ăслă пулма ырă чун кирлĕ. Тавах сире ырă чунăршăн, - терĕ вăл.

Ырă чунлă аппасемпе пиччесене вара уява килнĕ ачасем хăйсен куçĕпе курчĕç. Ав, Мăн Сĕнтĕр райповĕн ертӳçи Л. П. Майкова, "Заря" чикĕллĕ яваплăхлă общество ертӳçи П. Т. Терентьев 3-шер пин тенкĕ, "Чувашия-Поддержка" страхлакан компани" акционерсен уçă обществин ертӳçи Ф. Кирпичникова 1 пин тенкĕ укçа пачĕç.

***ХУШСА КАЛАНИ. Ыр кăмăллăх марафонне камсем хутшăнни тата мĕн чухлĕ пулăшу пани пирки хаçатăн кашни номерĕнчех паллаштарса тăтăмăр. ЧР Сывлăх сыхлавĕ тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи Н. П. Петрова пĕлтернĕ тăрăх, унччен тата халь çеç асăннисемсĕр пуçне ыр кăмăллăх марафонне çавăн пекех çак предприятисем хутшăнчĕç: "Кавказ" чикĕллĕ яваплăхлă общество 500 тенкĕ, "Йӳçкассинчи ватă çынсемпе инвалидсен çурчĕ" республикăри патшалăх учрежденийĕ 2800 тенкĕ, "Муркашри кирпĕч завочĕ" акционерсен хупă обществин специалисчĕсемпе рабочийĕсем 3090 тенкĕ, Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ" МП 1 пин тенкĕ, "Техникăлла инвентаризаци бюровĕ" МУП, "Декор" чикĕллĕ яваплăхлă общество 500-шер, Ильинка шкулĕ 800 тенкĕ укçа куçарчĕç. Асăннă список çакăнпах вĕçленмест-ха. Кăна эсир малаллахи калаçуран хăвăрах ăнланса илĕр.***



**Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – культурăпа архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ А.Е. Андреева уява хутшăнакансене саламлать.**

***Хатĕрсемпе пулăшакансен йышне Турай, Оринин шкулĕсем хутшăнчĕç. Тата "Моргаушрайбыт" чикĕллĕ яваплăхлă общество. Унăн ертӳçи А. П. Давыдов чăннипех асăнмалăх кун парнелерĕ уява килнĕ ачасене. Кун пирки кĕçех тĕплĕнрех каласа парăп.***

### *Чун пулсан, чул хушшинче те усрăпăр,*

тенĕ ĕлĕкех ваттисем. Кунта манăн ирĕксĕрех хамăн пĕлĕшĕн сăмахĕсене илсе кăтартас килет.

– Мана апи 40 çултан иртсен çуратнă. Тавах аннене мана кун-çул панишĕн, - паян та тав тăвать вăл амăшне, хăй хăйне амăшĕ çуратнă чухнехи ӳсĕмрен иртнĕ пулин те. Пирĕн районта, акă, пурĕ ачаллă çемьесем 4312 (вĕсенче 7122 ача çитĕнет) пулсан, вĕсенчен нумай ачаллă çемьесем 487. Çав нумай ачаллă çемьесенчен(1584 ача) 7 ачаллисем – 3 çемье. Вĕсенчен пĕри – Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Яковлевсем. Уявра "Ступень-Муркаш" ПТФ чикĕллĕ яваплăхлă общество ертӳçи М. В. Васильев Нина Геннадьевна çемйине 1 пин тенкĕ пачĕ. Халăхри пек каласан, пĕр шăтăк саплама çитет ку сумма.

Халĕ хĕрарăмсем виççĕмĕш мар, иккĕмĕш ача çуратма та иккĕленерех тăраççĕ те, 37 çулхи хĕрарăмран çапла ыйтрăм:

–Çăмăлах мар пулĕ 7 ачапа?

– Малтан йывăрччĕ, халĕ çитĕнчĕç ĕнтĕ, - терĕ вăл сăнне килекен çĕнĕ хĕрлĕ куртка тăхăнса пăхакан хĕрачи çине юратса тинкернĕ май.

Чăннипех те, Яковлевсен 4 арçын ачипе 3 хĕрачи паян амăшĕшĕн тем пысăкăш савăнăç. Ирхи 6 сехет çурăра ферма тухса каять вăл. Сыпайĕнчи сысна ферминче ĕçлет, мăшăрĕ - "Акимов" уйрăм предприятире. Кăнтăрла кăшт курăнса илет те килте, каçхине 7 сехетре киле таврăнать ĕçрен. Ачисем вакăрах чух килте тепĕр ĕç смени пуçланатчĕ. Халĕ вара ачисем вăл ĕçрен ĕшенсе таврăннă çĕре апатне те пĕçереççĕ, япала та çăваççĕ, килти мĕн пур ĕçе тăваççĕ. Асли – 17ре. Кĕçĕннине, 4 çулти ачине те пиччĕшĕсемпе аппăшĕсем амăшĕ фермăран таврăниччен куçран вĕçертмеççĕ.

– Ată-пушмакне кашнинех кашни çулах илсе паратпăр ĕнтĕ, ытти çи-пуçне те майлашăнса илсех тăратпăр, - кăмăллăн калаçать 7 ача амăшĕ. Халĕ, ак, ав, пĕр хĕрне куртка илсе парас хуйхă пĕтрĕ. "Моргаушрайбыт" чикĕллĕ яваплăхлă общество ертӳçи А. П. Давыдов уява килнĕ пур ачана та çак савăнăçа парнелерĕ. Пурĕ 32 пин те 400 тенкĕлĕх çĕленĕ вĕсем ача курткине.

Мăн Хураçкари Р.А. Волкован 4 ача. Асли 8 класа каять, кĕçĕнни - 2 класа. Эрне кун иртнĕ уявра иккĕмĕш хĕрĕ Зина уявран кăмăллă таврăнчĕ. Хăй килĕштернĕ шурă куртка парне пулчĕ уншăн. Амăшĕшĕн ачан телейлĕ те кăмăллă куллинчен хакли мĕн пултăр?

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

### Ыр кăмăллăх

## "Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн" ырă тĕслĕхĕ

"Ачалăхшăн, ачалăх ячĕпе" ыр кăмăллăх марафонĕ республикăра нарăс уйăхĕн 19-мĕшĕнче ăнăçлă старт илчĕ.

Кăçалхи марафонăн йĕркелӳ комитечĕн çум председателĕсем – Чăваш Республикин Президенчĕ, "Пĕрлĕхлĕ Раççей" партин Аслă Канашĕн членĕ Николай Федоров тата "Пĕрлĕхлĕ Раççей" партин Генеральнăй Канашĕн президиумĕн секретарĕн çумĕ, Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин Çĕршывсен хушшинчи ĕçĕн комитечĕн председателĕ Константин Косачев.

Константин Иосифович марафон ĕçлеме тытăннă пĕрремĕш кунах фонд пухмачне 22750 тенкĕ, Чăваш Республикин Президенчĕн Администрацийĕ марафона 99930 тенкĕ хыврĕç.

Пархатарлă пуçарура "Пĕрлĕхлĕ Раççей" партин вырăнти тата пуçламăш уйрăмĕсем, депутачĕсем, вĕсем ертсе пыракан ĕç коллективĕсем ырă тĕслĕх кăтартаççĕ.

"Пĕрлĕхлĕ Раççей" партин Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн фракцийĕн членĕ Валерий Иванов ертсе пыракан "АККОНД" АУО марафонăн пĕрремĕш кунĕнчех Раççей ача-пăча фончĕн Чăваш уйрăмне – 70 пин, ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви – 12 пин, "Фармация" ПУП 10 пин тенкĕ куçарчĕç.

"Пĕрлĕхлĕ Раççей" партин Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕнчи фракцийĕн пĕр депутачĕ те сăваплă ĕçрен аякра юлмарĕ", – тет партин регион уйрăмĕн политканашĕн секретарĕн çумĕ, марафонăн йĕркелӳ комитечĕн секретарĕ, Раççей ача-пăча фончĕн Чăваш уйрăмĕн правленийĕн председателĕ Юрий Кислов.

Пуш уйăхĕн 26-мĕшĕ тĕлне марафон фондĕнче 2753 пин тенкĕ ытла пуçтарăннă.

**Ыр кăмăллăх марафонĕ районта иртнĕ пирки паянхи номерте вуласа пĕлĕр.**

### Юбилей

## *Саламлатпăр*



Юратнă мăшăра, асаттене, кукаçие – Юнкă ялĕнче пурăнакан **Валериан Алексеевич ЕРМАКОВА** 70 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Нумай-нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, канлĕ ватлăх сунатпăр. Эпир санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн савăнатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе хĕрĕ, кинĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем тата тăванĕсем.**